27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
14
ЭРНЕКУН
138 (6633) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЕРЕМЕНКАНА

БАЛТИКА тӑрӑхӗнчи 2-мӗш фронт ҫарӗсем, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри тата хӗвеланӑҫнерехри районран наступлени пуҫласа ярса нимӗҫсен оборонине татнӑ та икӗ кун хушшинче 35 километр таран малалла куҫнӑ, татса кӗнӗ вырӑна 150 километр таран сарнӑ.

Наступлени туса пырса, ҫав фронт ҫарӗсем ИДРИЦА хулипе пысӑк чугун ҫул узелне, нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑраканскерне, тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан 1.000 пункта ытла йышӑннӑ, ҫав шутра — КУДЕВЕРЬ, ДУХНОВО, ЮХОВИЧИ, РОССОНО, КЛЯСТИЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем.

Нимӗҫсен оборонине татассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне КАЗАКОВ генерал-лейтенантӑн, ЮШКЕВИЧ генерал-лейтенантӑн, КОРОТКОВ генерал-лейтенантӑн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ХОРУЖЕНКО генерал-майорӑн, ВАХРАМЕЕВ генерал-майорӑн, КЛЕШНИН генерал-майорӑн, СЕДУЛИН генерал-майорӑн, ПЕРЕВЕРТКИН полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн НИЧКОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕСТЕРЕНКӐН, артиллери генерал-майорӗн КУПРИЯНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн НЕСТЕРУКӐН, артиллери генерал-майорӗн ШАЛУНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ХАРЛАМОВӐН артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИН, ЛЕБЕДЕВ полковникӑн, КОЧЕРГИН полковникӑн, НИКОЛАЕВ полковникӑн, ЮДИН полковникӑн, ПАРАМОНОВ полковникӑн, БРЕГВАДЗЕ полковникӑн, СИВКОВ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн НАУМЕНКӐН, авиаци генерал-майорӗн ДАНИЛОВӐН, авиаци генерал-майорӗн РУБАНОВӐН, ЛИТВИНОВ полковникӑн, КОРПУСОВ полковникӑн, ТРУШКИН полковникӑн, ВОЕВОДИН полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПИЛИПЕЦӐН, ЕГОРОВ полковникӑн, ЛЕЩЕВ полковникӑн, ШУРАШЕВ полковникӑн, БЕЛОЗЕРЦЕВ подполковникӑн саперӗсем тата ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн ПАНИНӐН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн ДЕНИСОВӐН, СПИВАК полковникӑн, АКИМОВ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ялан аса илмелле пултӑр тесе, нимӗҫсен оборонине татассишӗн тата ИДРИЦА хулине тытса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ИДРИЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 12-мӗшӗнче, 23 сехетре, хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, БАЛТИКА тӑрӑхӗнчи 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, нимӗҫсен оборонине татнӑскерсене тата ИДРИЦА хулине тытса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн эсир ертсе пыракан ҫарсене, ташман оборонине татассишӗн тата ИДРИЦА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 12-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем паян, июлӗн 13-мӗшӗнче, пиллӗк кун хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, нимӗҫсен ВИЛЬНЮС хулинче хупӑрласа илнӗ гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ та Советлӑ Литва республикин столицине фашистла захватчиксенчен ирӗке кӑларнӑ.

ВИЛЬНЮС хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче КРЫЛОВ генерал-лейтенантӑн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорӑн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорӑн, ПОПЛАВСКИЙ генерал-майорӑн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорӑн, ЛАСКИН генерал-майорӑн, КАЗАРЬЯН генерал-майорӑн, ДОНЕЦ полковникӑн, КАЛИНИН генерал-майорӑн, АЛЕКСЕЕНКО генерал-майорӑн, ЖЕКОВ — БОГАТЫРЕВ полковникӑн, БАБАЯН полковникӑн, ГОРОДОВИКОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн БАРСУКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ФЕДОРОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ВЛАДИМИРОВӐН, БАРЫШЕВ полковникӑн, РАХМАНОВ полковникӑн, ЧЕРНЕТ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ЮДИЧЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн РОЖАНОВИЧӐН, ГАЦКО полковникӑн, СЕДОВ полковникӑн, ТИХОМИРОВ подполковникӑн, ГУЖВА майорӑн, ЛИТВИНОВ подполковникӑн, КОЗЛОВ подполковникӑн, РЫЖИКОВ майорӑн, УСОВ майорӑн, НИКИТИН подполковникӑн, НАУМЕНКО подполковникӑн, КОЛУПАЕВ майорӑн, ШАРКОВ майорӑн, МЕЩИНСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ОБУХОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн РОДИНӐН, РОДИОНОВ полковникӑн, КРЕМЕР полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн АСЛАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн СОЛОВЬЁВӖН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ВОВЧЕНКӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФОМИНЫХӐН, ГРИЦЕНКО полковникӑн, ЕСИПЕНКО подполковникӑн, ДОЛГАНОВ полковникӑн, МОЛЧАНОВ подполковникӑн, КУРНОСОВ подполковникӑн, МИШЕНКО подполковникӑн, ДЬЯЧУК подполковникӑн, КРУТИЙ полковникӑн, СОЛТЕР подполковникӑн, БОРЩЕНКОВ майорӑн, НЕМКОВИЧ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ХРЮКИНӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БЕЛЕЦКИЙӖН, авиаци генерал-лейтенанчӗн САВИЦКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн АНДРЕЕВӐН, САВИН полковникӑн, ГОРБАТЮК подполковникӑн, ОРЛОВ подполковникӑн, ДОРОШЕНКО подполковникӑн, ЗАЙЦЕВ подполковникӑн, ЧУЧЕВ полковникӑн, КАТКОВ майорӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ЧУМАЧЕНКО полковникӑн, РОДИН полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн БАРАНОВӐН, МОЛЧАНОВ полковникӑн, РАБИНОВИЧ майорӑн, ЮСУПОВ полковникӑн ЛУКАШЕНКО полковникӑн саперӗсем тата ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БУРОВӐН, ПРИХОДАЙ полковникӑн, БЕЛОВ подполковникӑн, МИНИН полковникӑн, ТКАЧЕНКО полковникӑн, ТАРАСЕНКО майорӑн, СЕМЕНОВ майорӑн, СУХИНИН майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ялан аса илмелле пултӑр тесе, ВИЛЬНЮС хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ВИЛЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, июлӗн 13-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутӑра хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн столици МУСКАВ, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, Советлӑ Литва столицине — ВИЛЬНЮС хулине йышӑннӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн эсир ертсе пыракан ҫарсене, ВИЛЬНЮС хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлӗн 13-мӗшӗ.

Комсомол организацисен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хушнӑ пек йӗркелесе ямалла

ВЛКСМ Обкомӗн ҫак кунсенче пулса иртнӗ Х-мӗш пленумӗ «Комсомолӑн ялти организацийӗсен задачисем» тата «Комсомола илес ӗҫӗн 1944 ҫулхи улттӑ уйӑх хушшинчи итогӗсем» ҫинчен сӳтсе-явса решенисем йышӑнчӗ.

Комсомолӑн ялти организацийӗсем совхозсемпе колхозсен уйхирӗсенче, фермӑсенче вӑй шеллемесӗр ӗҫленипе ҫӗрлех, ҫамрӑксене вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме мобилизацилес енӗпе те сахал мар ӗҫлерӗҫ. Нумай ҫын комсомолецсемпе ҫамрӑксем, фронта кайнӑ колхозниксем вырӑнне тӑрса, трактористсем, комбайнерсем пулса ӗҫлеҫҫӗ, звенӗсене, бригадӑсене, колхозсене ертсе пыраҫҫӗ. Республикӑри колхозсенче вӑйлӑ тырпулшӑн ӑмӑртса ӗҫлесси анлӑн сарӑлса пырать. Вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешекен ҫамрӑксен звенисене 453 ҫӗрте тунӑ. МТС-сенче ҫамрӑксен 52 тракторнӑй бригади ҫӗр-ҫӗрпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

Комсомолӑн ялти организацийӗсем йыш тӗлӗшӗнчен те ӳссе ҫирӗпленчӗҫ. Кӑҫал улттӑ уйӑх хушшинче малта пыракан ҫамрӑксене 5.491 ҫынна комсомол ретне илнӗ. Вӗсем колхоз производствинче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлесе, фронтпа ҫӗршыв валли апат-ҫимӗҫ ытларах та ытларах парса тӑрассишӗн пример кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех ВЛКСМ Обкомӗн пленумӗ комсомол организацийӗсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртрӗ. Комсомолӑн Ишлей, Сӗнтӗр, Улатӑр, Йӗпреҫ райкомӗсем ҫамрӑксен вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешекен звенисене организацилес, вӗсене ертсе пырас ӗҫе манӑҫа хӑварнӑ. Ҫавна пула ӗнтӗ вӑл районсенче нумай звеносем саланса кайнӑ. Республикӑри чылай колхозсенче ҫум ҫумлас ӗҫ сӳрӗк пырать.

Пленум комсомол организацийӗсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ыйтупа ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗ. Комсомолецсем фермӑсене хӗле хатӗрлес, выльӑх апачӗсен базине тӑвас, выльӑхсене лайӑх пӑхса ӳстерес ӗҫе активлӑн хутшӑнмаҫҫӗ. Элӗк районӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ирттерсе тултарнӑшӑн Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илнӗскер, халӗ ытти районсенчен юлса пыма тытӑнчӗ. Апла пулин те, комсомол райкомӗпе пуҫламӑш организацисем ҫамрӑксене выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана тултарассишӗн кӗрешме мобилизацилес енӗпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнман.

Ялти ҫамрӑксем хушшинче политикӑлла-массӑллӑ ӗҫе начар йӗркеленӗ. Вӑл ӗҫе комсомолӑн Ишлей тата ытти чылай райкомӗсем хакламаҫҫӗ. Ишлей райкомӗн пропагандӑпа агитаци тата культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫӗн комиссийӗсем пачах ӗҫлемеҫҫӗ. Активистсем докладсемпе калаҫусем ирттермеҫҫӗ. ВЛКСМ райкомӗн работникӗсем те ялсенче сахал пулаҫҫӗ. ВЛКСМ Обкомӗ те политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе комсомолӑн райкомӗсемпе пуҫламӑш организацисене кирлӗ пек ертсе пыман. Ҫакӑ вӑл комсомол организацисен йышне ӳстерес ӗҫре те хытӑ сисӗнет. Комсомолӑн республикӑри организацийӗсенчен 626-шӗ кӑҫал пӗр ҫамрӑка та комсомола илмен.

Комсомол организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем, пуринчен ытла, комсомол работникӗсене суйласа илсе, вӗсене воспитани парас, йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслес ӗҫсем ҫине ҫителӗксӗр ҫавӑрӑнса пӑхнӑ ҫирки пулнӑ.

Пленум комсомолӑн ялти организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме, мӗнпур ҫамрӑксене 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне пурнӑҫа кӗртессишӗн, тырпулсене лайӑх та хӑвӑрт пухса кӗртессишӗн кӗрешме мобилизацилеме хушрӗ. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртмешкӗн ВЛКСМ Обкомӗпе райкомӗсен колхозсемпе МТС-сенчи пуҫламӑш организацисене ертсе пырас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла. Ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ тата воспитани ӗҫне анлӑн сарса пымалла. Комсомол организацийӗсен халӗ вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешекен звеносене ҫирӗплетмелле, вӗсен йышне ӳстермелле. Ҫамрӑксемпе шкул ачисене ҫум ҫумлас, ҫӗртме тӑвас, уборка машинисене юсас, выльӑх-чӗрлӗх фермисене хӗле хатӗрлес ӗҫе мобилизацилес пулать. Колхозсен ӗҫ планне тунӑ ҫӗре активлӑн хутшӑнса, комсомол вӑйне ответлӑ участоксене вырнаҫтарса пухмалла тӑвас пулать. Государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫлама мӗн кирлисене халех хатӗрлемелле. Транспортнӑй бригадӑсем организацилемелле, складсемпе амбарсене тӗплӗн юсамалла. Тырпулсене сыхлас ӗҫе вӑйлатас пулать.

Ялти комсомолецӑн ӑнӑҫлӑн ӗҫлеме тата хӑй хыҫҫӑн колхозниксене ертсе пыма, халӑх умӗнче авторитетлӑ ҫын пулма кирлӗ практикӑллӑ пӗлӳсене туянмалла. Ялти комсомолецӑн тивӗҫӗ—хӑй ӑҫта ӗҫленине кура агротехникӑпа зоотехникӑн пӗлӗвӗсене туянасси пулать.

Пленум комсомола илес ӗҫӗн 1944 ҫулхи улттӑ уйӑх хушшинчи итогӗсем тӑрӑх йышӑннӑ решени те питех те кирлӗ документ пулса тӑрать. Комсомолӑн Обкомӗпе райкомӗсен тата пуҫламӑш организацисен комсомола илес ӗҫри ҫитменлӗхсене сывӑх вӑхӑтрах пӗтермелле. Колхоз ҫамрӑкӗсем хушшинче воспитани ӗҫне лайӑх йӗркелесе, малта пыракан колхозниксемпе колхозницӑсене комсомол ретне йышӑнма явӑҫтармалла. Ҫавӑнпа пӗрлех ҫамрӑк комсомолецсене ӗҫе хӑнӑхтарасси ҫинчен пӗр минутлӑха та манма юрамасть.

ВЛКСМ Обкомӗн пленумӗ йышӑннӑ решенисем республикӑри комсомол организацисене хӑйсен ӗҫне татӑклӑнах ҫӗнетсе лайӑхлатма хушаҫҫӗ. Активпа ытларах сыхӑнса ӗҫлемелле, активна ытларах ӗҫе явӑҫтармалла.

Парти организацийӗсен вырӑнсенче комсомола хальхи талхӑр ыйтнӑ пек, пурнӑҫ ыйтнӑ пек ӗҫлеме вӗрентмелле. Парти организацийӗсем ертсе пынипе комсомол хӑйӗн умӗнчи задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме тивӗҫлӗ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Маршалне СТАЛИН юлташа

Пирӗн 3064-мӗш номерлӗ эвакогоспитальри врачсемпе медицина сестрисен, санитаркӑсен тата рабочисемпе служащисен коллективӗ, Хӗрлӗ Ҫар паттӑррӑн наступлени туса пынипе кавхаланса тата Сире, каклӑ Иосиф Виссарионович, чӗререн юратса, нимӗҫ оккупанчӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас сехете ҫывӑхартмашкӑн хӑйӗн перекетленӗ укҫине пухса пӗр санитарнӑй боевой самолет туянчӗ.

Сиртен, Иосиф Виссарионович, ҫав хамӑр илнӗ самолета Ленинград фрончӗн командующийӗн, Совет Союзӗн Маршалӗн Говоров юлташӑн аллине пама ыйтатпӑр.

Сире хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршыв телейлӗхӗпе ӑна чечеклентерессишӗн нумай ҫулсем хушши пурӑнма сывлӑх сунатпӑр.

Эвакогоспиталь начальникӗ медицина службин капитанӗ СОКОЛОВ
Эвакогоспиталь начальникӗн заместителӗ капитан БУРМИСТРОВ
Парторганизаци секретарӗ ВАСИЛЬЕВ
Местком председателӗ ОВЕЧКИН.

Чӑваш АССР-ӗ, Куславккари 3064-мӗш номерлӗ эвакогоспиталь
Эвакогоспиталь начальникне медицина службин капитанне СОКОЛОВА
Эвакогоспиталь начальникӗн заместительне БУРМИСТРОВА
Парторганизаци секретарьне ВАСИЛЬЕВА
Местком председательне ОВЕЧКИНА

3064-мӗш номерлӗ эвакогоспитальри врачсемпе медицина сестрисене, санитаркӑсене, рабочисемпе служащисене, санитарнӑй боевой самолет тума укҫа пухнӑскерсене, манран боевой салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар тав туни ҫинчен пӗлтерӗр.

Эвакогоспиталь коллективӗ ыйтни пурнӑҫа кӗрӗ.

И. СТАЛИН.

РЕМЕСЛА УЧИЛИЩИСЕНЧЕ ВӖРЕНЕКЕНСЕНЕ КАНМА ЯНӐ

Ремесла училищисенче вӗренекенсене, 16 ҫултан ҫамрӑкраххисене, иккӗмӗш ҫул вӗренекеннисене, икӗ эрнене канма янӑ. Вӗсенчен нумайӗшӗ халь профсоюзсен санаторийӗсене тата кану ҫурчӗсене кайнӑ. Темиҫе пин ҫамрӑк хӑйсемшӗн Баку, Свердловск, Тула тата ытти хуласенче уҫнӑ кану ҫурчӗсене канӗҫ.

«Клим Ворошилов» пароход ҫине ларса ремесла училищисенче вӗренекен 360 ача Горькирен Астрахане кайнӑ. Ҫу иртиччен ҫав пароход Горькирен Астрахане ҫиччӗ хут кайса килет. Мускавран Горькие теплоход туса каять, ун ҫинче вӗренекен энергетиксем, металлистсем тата полиграфистсем 250 ача пулаҫҫӗ. Ҫав пароход ҫу каҫиччен Горькие виҫӗ хут кайса килмелле. Пароход ҫинче библиотека, биллиард, музыка инструменчӗсем, шахмат тата шашка пур. Вӗренекен ачасене вӗсен учителӗсем ертсе пыраҫҫӗ. (ТАСС).

Узбекистанри ученӑйсем ҫӗрмамӑкӗ туса иленсене пулӑшаҫҫӗ

Узбекистанри наука работникӗсем — агрономсем, энтомологсем, селекционерсем— пысӑк тухӑҫлӑ ҫӗрмамӑкӗ туса илме пулӑшмашкӑн колхозсемпе совхозсене тухса кайнӑ.

Ҫӗрмамӑк институчӗн наука работникесем колхозсемпе совхозсенче темиҫе ҫӗр консультаципе лекци иртгернӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПИТКЯРАНТА хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Вӑл шутра—ВАЛИКЮЛЯ, СУВИЛАХТИ, ЛЕМЕТТИ, КИЕТЯРВИ, НИЕМЕЛЯ ятлӑ пысӑк ялсем тата СУОЯРВИ чугун ҫул станцийӗ.

ПОЛОЦК хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ. Халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — БОРКОВИЧИ, ДЕХТЯРЕВО, ФИЛИППОВО, ВОДВА, НАРКОВИЧИ, БОЛЬШИЕ ГОРКИ, МАЛЫЕ ГОРКИ, БАРСУКИ ятлӑ пысӑк ялсем тата БОРКОВИЧИ чугун ҫул станцийӗ.

ДВИНСК хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — КУКУТАНЫ, ЧЕПУКАНЬ, КУКТИШКЕС, ЛАБАНОРАС, БИЮНЫ, ОРНЯНЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЧЕПУКАНЫ, ЧЕРНЫЙ БРУТ чугун ҫул станцийӗсем.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем Вильнюс хулин центрӗнче тӑшманӑн вакланса пӗтнӗ ушкӑнӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн малалла ҫапӑҫнӑ.

ВИЛЬНЮС хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, БАРАНОВИЧИ облаҫӗнчи район центрне ВОРОНОВАНА туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — МЕЙШАГОЛА, РУДЗИШКИ, ОЛЬКЕНИКИ, ЭЙШИШКИ, ГОЛЬМЕНЦИШКИ, ЖИРМУНЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата ШКЛЯРЫ, РУДЗИШКИ, ВОРОНОВО, БАСТУНЫ, ГУДЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ЛИДА хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — БЕЛИЦА, КОРЫТНИЦА, ДЕМЯНОВЦЫ, ШЕРШНИ, ШЕСТИЛЫ, ЯВОРСКАЯ РУДА, МАЛАЯ ВОЛЯ, КОЗЛОВЩИНА, ГОРОДКИ.

МИНСК хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ ушкӑнӗсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Июлӗн 10-мӗшӗнче ку районра 2000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Пирӗн ҫарсене нимӗҫсен 27-мӗш армейски корпусӗн командирӗ инфантери генералӗ ФЕЛЬКЕРС хӑйӗн штабӗ-мӗнӗпех тыткӑна парӑннӑ.

БАРАНОВИЧИ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — халӑх пурӑнакан ЯРНЕВО, ОЗЕРНИЦА, МЫСЛОВО, ЮХНОВИЧИ, КОСТЕНЕВ, ГЛОВСЕВИЧИ, БУЛЛА, ХОРОЩА, СЕНКЕВИЧИ, ЛУБИЩИЦЕ, ЯГЛЕВИЧИ ятлӑ пысӑк пунктсем.

ПИНСК хули енче пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Вӑл шутра — ЛОВЧА, СЕЛИЩЕ, ЛЕМЕШЕВИЧИ, МОРОЗОВИЧИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЛОВЧА чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 46 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 77 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

ИЮЛӖН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 12-мӗшӗнче КОНДОПОГА хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — ПОРОСОЗЕРО, КРАСНЫЙ ПАХАРЬ, ВАЛЗАМА, ПЯЛЬВОЗЕРО, КОСТАМУКСА, ЕХКИЛЯ, ЛЕППЯНИЕМИ, КУЙККАНИЕМИ, КАЙПА ятлӑ пысӑк ялсем тата КАЙПА, ХАЛЛАСЕЛЬКА чугун ҫул станцийӗсем. ЛАДОГА кӳллин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче пирӗн ҫарсем ЛУНКУЛАН-САРИ тата МАНТСИН-САРИ утравӗсене тӑшмантан тасатнӑ.

БАЛТИКА тӑрӑхӗнчи 2-мӗш фронт ҫарӗсем, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри тата хӗвеланӑҫнерехри районран наступлени пуҫласа ярса, нимӗҫсен оборонине татнӑ та икӗ кун хушшинче 35 километр таран малалла кайнӑ, татса кӗнӗ вырӑна 150 километр таран сарнӑ. Наступлени туса пырса, ҫав фронт ҫарӗсем ИДРИЦА хулипе пысӑк чугун ҫул узелне тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан 1.000 пункта ытла йышӑннӑ, ҫав шутра—Калинин облаҫӗнчи район центрӗ КУДЕВЕРЬ, Витебск облаҫӗнчи район центрӗ РОССОНО, унтан ВЕРХНЕЕ КУНИНО, ДУХНОВО, ПИЧУРИНО, ДУПЛИ, КИСЕЛЕВА, АРТЮХОВО, ГАРУСОВО, МЯКИШЕВО, РАССОХИНО, КЛЯСТИЦЫ, ЕССЕНИКИ, МАЛЮЗИНО, ЛОБАЧИ, ВЕРБИЛОВО, ЗАЛИВИЦА, ПОЗДНЯКИ, ЮХОВИЧИ ятлӑ пысӑк ялсем тата НАЩЕКИНО, НИЩА, СИЛКОВО, РОССОНО, ОЗЕРЦЫ чугун ҫул станцийӗсем.

ПОЛОЦК хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ДРИССА шывӗ урлӑ каҫнӑ та ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — ГОЛОВЩИЦА, ДЕРНОВИЧИ, ЗЯБКИ, АНТОНОВКА, ЖЕЛТОВЩИНА, ПОЛЬЗИНО, ВОЛЫНЦЫ, СОСНОВЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата СВОЛЬНА чугун ҫул станцийӗ.

ДВИНСК хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра—РЫМШАНЫ, ДУКШТЫ, НАРЮНАЙ, ИНДУРКЕ, БОРАНЦЫ, ГЕДРОЙЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата РЫМШАНЫ, ДУКШТЫ чугун ҫул станцийӗсем.

ВИЛЬНЮС хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступлени туса пырса, Литва ССР-ӗн уезд центрне ТРАКАЙ хулине, БАРАНОВИЧИ облаҫӗнчи район центрӗсене ВАСИЛИШКИ хулине тата РАДУНЬ ялне, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла йышӑннӑ, ҫав шутра — ЕВЬЕ, ПАНАШИШКИ, ЛЕЙПУНЫ, ЖИЛИНЫ, ВОЙТОВО, ПОМЕРЕЧЬ, ПОВИЛАНЦЫ, НАЧА, ПЕЛЯСА, НОВЫЙ ДВУР, БАКШТЫ, ОСТРЫНА ятлӑ пысӑк ялсем.

ВИЛЬНЮС хулинче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн хула варринче хупӑрласа илнӗ ушкӑнне пӗтерсе пынӑ.

ЛИДА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла тытса илнӗ, вӑл шутра — ХОДЮКИ, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, ОЛЬГОВЦЫ, МОТЕВИЧИ, НОВОСЕЛКИ, ЛАНЦЕВИЧИ, ЗОЛОТЕЕВО, ДЕРЕЧИН, ГРАБОВО ятлӑ пысӑк ялсем тата КУРГАНЫ чугун ҫул станцийӗ.

БАРАНОВИЧИ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступлени туса пырса, Барановичи облаҫӗнчи район центрне ЗЕЛЬВА хулине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, ҫав шутра — СЕЛЕВИЧИ, ОСТРОВО, КОВАЛЬЕ, КВАСЕВИЧИ, КОССОВО, ЗАПОЛЬЕ, НЕХАЧЕВО ятлӑ пысӑк ялсем тата ОЗЕРНИЦА, ИВАНЦЕВИЧИ, КОССОВО чугун ҫул станцийӗсем.

ПИНСК енче пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ, ҫав шутра — ДУБНОВИЧИ, СОШНО, ПАРСХОНЬСК, ВЫЛАЗЫ, СУШИЦКОЙ, ГОРНОВО, ВЕЛАТЫЧИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ПАРОХОНЬСК чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 37 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 29 самолетне персе ӳкернӗ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронт çарĕсем наступлени пуçласа янă. Совет артиллерийĕпе авиацийĕ нимĕçсен укрепленийĕсене тата персе тăракан вырăнĕсене хăватлăн пырса çапнă. Вут-çулăм хумĕ хыççăн пирĕн пехота наступленине кайнă. Тăшман çав участокра нумай вăхăта пыракан тата нумай шала каякан оборона тăрăхĕ туса хунă, ăна «Пантера» линийĕ тесе ят панă. Нимĕçсен оборонинче сынсем кĕрсе тăмалăхах тарăп чавнă темиçе рет траншея пулнă, вĕсем умне пралук карса тухнă тата минăсем нумай лартса тухнă. Чи кирлĕрех участоксене бетонран тунă сооруженисемпе тата броньăланă калпаксемпе хÿтĕлесе тăнă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсен оборонине татнă, наступленин пуçламĕш сехечĕсенчех эсэсовецсен икĕ дивизине йывăр сухату тÿстернĕ. Апăçăва малалла аталантарса пырса, пирĕн пехотинецсемпе танкистсем Идрица хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ тата хальхи пурăнакан 1.000 пункта ытла йышăннă. Нимĕçсем малтанах хатĕрлесе хунă хушăри рубежсенче çирĕпленсе ларма хăтланнине совет çарĕсем пĕлсе тата вăйлăн çапса сирсе янă. Тăшманăн Алоля шывĕ тăрăх пыракан оборона рубежне пирĕн пехота, пĕр чарăнса тăмасăр пырса çапса, пĕтĕм талккăшĕпех татнă. Тăшман питĕ пысăк сухатусем тÿсет. Пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен 7.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ тата 1.500 çынна çити тыткăна илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, 100 тупă ытла, 150 миномет, 500 пулемет ытла тата ытти трофейăсем те нумай тытса илнĕ.

* * *

Двинск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман хурал дивизийĕн тата икĕ пехотнăй дивизин çĕнĕ чаçĕсене çапăçăва кĕртсе янă та питĕ хытă хирĕç тăрать. Кÿлĕсем хушшинче оборонăра тăрса, нимĕçсем куна каçиччен 10 хут контратака тунă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман контратакисене сирсе янă та, малалла кусса пырса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче пин гитлеровец ытла вилсе е аманса выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн пехотинецсем вăрманлă-шурлăхлă вырăнта 12 километр малалла кайнă. Тăшман пехотин икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 115 тупă тытса илнĕ, вĕсенчен пиллĕкĕшĕ—хай тĕллĕн çÿрекенпипсем.

* * *

Вильнюс хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла кусса пынă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе тăшманăн халăх пурăнакан пĕр пунктран тепĕрне хăварса пыма тивет. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем Литва ССР-ĕн уезд центрне — Вильнюс хулинчен 27 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Тракай хулине тытса илнĕ. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, пĕр чаçăн подразделенийĕсем нимĕç пехотин батальонне хупăрласа илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Çав батальонăн юлашкийĕсем, 189 çын, хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна паранă. Тепĕр районра пĕр соединени чаçĕсем кун каçиччен 500 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 700 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Барановичи хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени боецĕсем, каялла чакакан тăшман хыççăнах хăваласа пырса, Зельвянка шывĕ урлă каçнă та, вирлĕн атакăласа, шоссе çулĕсемпе ахаль çулсен узелне — Барановичи облаçĕнчи район центрне Зельва хулине тытса илнĕ. Çар пурлăхĕн темиçе складне туртса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсемпе кавалеристсем тăшман колоннине аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли выртса юлнă. Пирĕннисем 8 зенитнăй тупă тата 45 автомашина тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Пинск облаçĕнчи партизансен темиçе отрячĕ июлĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсен çар чаçĕн штабне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, радиостанцие тата боеприпассен склачĕсене пĕтерсе тăкнă. 10 пулемет, 40.000 патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Вулав çурчĕ—культура вучахĕ

КАЛИНИНО. Комсомолец Семен Сергеев Кÿлхĕрри ялсоветĕнче вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл тытăннăранпа вулав çурчĕн ĕçĕсем чылаях лайăхланчĕç. Чи малтанах вăл ялти актива вулав çурчĕ тавра явăçтарма тăрăшрĕ. Çапла вара вулав çурчĕ çумĕнче хор тата драма кружокĕсем организациленĕ. Вĕсене комсомолка А. Викторова ертсе пырать. Драма кружокĕ кăçал 10 постановка ларпса панă. 11 хутчен вечер туса ирттернĕ. Кунсăр пуçне Вăрнар районĕнчи Калăш ялĕнче те темиçе хутчен спектакль лартнă.

Вулав çуртĕнче пурĕ пин кĕнеке ытла. Вăл хисепре вăрçă вăхăтĕнчи кĕнекесем 200 ытла шутланаççĕ. Палăках, ку вăл çителĕксĕр. Çавăнпа та Сергеев юлташ халь çĕнĕ кĕнекесем туянас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Вулакансен йышĕ те кунта кулленех ÿссе пырать. Кăçал 200 колхозник тĕрлĕ кĕнекесем илсе вуланă. Сăмахран, 55 çулхи колхозник Т. Кушаков 5 кĕнеке, тимĕрçĕ Р. Орлов 24 кĕнеке вуланă.

Колхозниксемпе колхозницăсем вулав çурчĕ умĕнчи витринăри хаçатсене (унта пур тĕрлĕ хаçатсем те пур) пĕр сиктермесĕр вулаççĕ. Витрина умĕнче кунсеренех çĕршер колхозник пулать.

Вулав çурчĕ çумĕнче тухакан «Çĕнтерÿ» ятлă стена хаçачĕ кăçал 7 номер, боевой листок 42 номер тухнă. Çураки вăхăтĕнче Сергеев юлташ колхозниксем хушшинче 10 хутчен доклад тата калаçу ирттернĕ. А. Викторова, А. Нарышкина тата П. Афанасьев комсомолец-агитаторсем Сталин юлташăн приказне халăха тĕплĕн ăнлантарса панă. Вĕсем халĕ те политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ.

Вулав çурчĕ яланах таса та тирпейлĕ. Стена çинчи плакатсемпе лозунгсем, çулпуççен сăнĕсем вулав çуртне илем кÿрсе тăраççĕ. Унтах «Славные сыны чувашского народа» ятлă кĕтес тунă. Унта фронтра геройла çапăçса мухтава тухнă чăваш ывăл-хĕрĕсем çинчен çырнă статьясемпе эпизодсене тата вĕсен сăн ÿкерчĕкĕсене çыпăçтарса тăраççĕ.

Б. ШЮРНИКОВ.

А. С. Пушкин çинчен калакан çĕнĕ документ

Государствăн литература архивĕ вырăссен малтанхи художникĕсенчен пĕри Л. С. Бороздна художница çырса хăварнисене илнĕ. Вăл çырусене иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче çырнă. Çырусем хушшинче хăçан çырнине палăртман çыру пур. Унта карандашпа çапла çырнă: «Медведево. А. С. Пушкин пирĕн патăрта 4 кун пурăнчĕ. Вăл пире тата Жуковскипе Вяземскине курма килнĕ».

Ку документ питех те кирлĕ. Пушкин биографине çыракансемшĕн поэт Медведевăра художницăпа, Жуковскипе тата Вяземскипе тĕл пулни ку таранччен паллă пулман. (ТАСС).

Республика уйхирĕсенче

Сухаласси сухалаççĕ те... хыççăн çÿрелемеççĕ

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Районри колхозсен 4506 гектар таса çĕртме тумалла. Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне çавăнтан 98 процентне сухаланă.

Малта пыракан колхозсем çĕртме сухине вăхăтра та лайăх туса хăварчĕç. «Правда» колхоз çĕртме пуссине 1197 лав тислĕк кăларнă. Тислĕке хирпе типсе выртма паман, çийĕнчех сухаласа хăварнă, çÿреленĕ. Правленипе пахалăх комиссийĕ çĕртме сухине паха тесе йышăннă.

Кÿрши тырăсем акса хăвармалли пусăсене çавăн пекех «Париж Коммуни», «Большевик» тата «Гвардия» колхозсем тислĕк нумай тăкса сухаланă.

Çав вăхăтрах районра çĕртме тăвас ĕçе тăсса пыракан колхозсем те пур-ха. «Мотор» колхозăн сухаламалли татах 44 гектар юлнă. Правлени каланă тăрăх, колхозра çĕртме тăвас ĕç юлса пыни туртăм вăйĕ çителĕксĕрринчен килет. Тĕрĕссипе сăлтав туртăм вăйĕнче çеç мар. Правлени хай çĕртме тăвас ĕçе кирлĕ пек ертсе пымасть: кашни бригадăна уйрăм задани паман, ĕçе сдельщинăпа йĕркелемен. Çĕртме тумалли лашасем хăшпĕр кун ахаль тăраççĕ е урăх ĕçре пулаççĕ.

Туртăм вăйĕпе тĕрĕс мар усă курни «Красный пахарь», «Ишлей», «Янду» колхозсенче те пур.

Мăнтарри «Искра» колхозăн 105 гектар çĕртме тумалла. Ку таранччен унта сÿррине çеç сухаланă.

Районри чылай колхозсенче çĕртмене сухаланă хыççăнах сÿрелесе пымаççĕ. Сăмахран, «Ырăш», «Боевик», «Социализм» колхозсем çĕртме пуссисене пĕтĕмпех сухаланă, анчах пачах та сÿрелемен. «Пархикасси», «III Интернационал» колхозсенче те сÿрелес ĕç сухалас ĕçрен юлса пырать. Çакă вăл агротехника кăтартăвĕсене пăсни пулать. Ишлей райçĕрĕç пайĕн руководителĕсемпе специалисчĕсем çавна асăрхамаççĕ, агротехникăпа пăсилпе кĕрешмеççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Силос хывас ĕçе хакламаççĕ

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем силос хывас ĕçре юлса пыраççĕ. Плана тултарнă колхозсем пĕрре çеç шутланаççĕ. Районĕпе 5300 тонна силос хывмалла пулсан, июлĕн 8-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 1628 тонна çеç хывнă.

Уйрăм колхозсен руководителĕсем силос хывас ĕç сине сиелтен пăхаççĕ. Шарыпкăри Ворошилов ячĕпе тăракан, Мăн Тукташри Горький ячĕпе тăракан, Тури Елăшри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем Флегентов, Иванов тата Клементьев юлташсем çак ĕçе кĕркунненех хăварма шутлаççĕ. Вĕсем силос хывас ĕçе организацилемен. Çав вăхăтрах уйра тата çырмасенче курăксем ахаль сая каяççĕ.

Горький ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх 50 лав милĕк, 14 центнер вĕлтрен, 13 центнер арăмути тата 20 центнер витаминлă утă хатĕрлемелле, вăл çак ĕçе пуçăнман.

Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе Элĕкри «Большевик» колхоз та (председателĕ Бойков) начар ĕçлет. Вăл та ку таранччен силос хывман, путексем валли милĕксем тата витаминлă утă хатĕрлеме тытăнман.

Райçĕрĕç пайĕнчи работниксене колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлесси пачах çителĕксĕр пулса пыни паллă. Ун çинчен ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ те пĕлеççĕ. Анчах ĕçе хăвартлатас енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, вăл ыйтупа куллен интересленсе ĕçлени курăнмасть.

Х. ЛИСИН.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 10-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Кан хули секторĕнче пыракан çапăçусем Одон шывĕнчен кăнтăртарахри района куçнă. Пирĕн Одон плацдармĕнчен наступлени туса пыракан çарсем Этервиль тата Мантo ялĕсем витĕр тухса кайнă. Пирĕн наступлени туса пыракан çарсем тăшманăн ĕнер çавăрса илнĕ опорнăй пункчĕсене пĕр чарăнса тăмасăр пĕтерсе пыраççĕ. Карантан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Перье патнелле каякан çул тăрăх наступлени туса пыраççĕ, вĕсем Сентени ялне ирĕке кăларнă. Тилли-сюр-Сель хулинчен тата Ла-Э-дю-Пюи хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем нимĕçсен бронетанковăй вăйĕсен вăйлă контратакисене сирсе-сирсе янă, тăшманăн танкĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Июлĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем тăшманăн çулйĕрĕсене темиçе хутчен те атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 11-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Одон шывĕ çинчи укрепленисен секторĕнче союзниксен çарĕсем, тăшманпа хаяррăн çапăçса, малалла кусса пынă, вĕсем Орн шывĕ çывăхĕнчи çÿллĕ вырăнсем патнелле куçнă. Тăшман çине наступлени пуçласа ямалли Вир шывĕ çинчи укрепленирен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Сен-Ло хули енчи Пон-Эбер патнелле куçнă. Унтан хĕвеланăçнерехре, Периге патнелле куçса пырса, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкнă, пĕр миля малалла куçнă. Ла-Э-дю-Пюи хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем вырăнĕ-вырăнĕпе çитĕнÿсем тунă. Ку районра тăшман контратакăсем туман.

Июлĕн 10-мĕшĕнче союзниксен ракетлă установкăсемпе усă куракан самолечĕсем тăшманăн тĕрлĕ объекчĕсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 11-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Ла-Э-дю-Пюи хулинчен кăнтăртарахра тăшмана пĕр чарăнса тăмасăр кăнтăралла хĕстерсе пыраççĕ. Тăшман, пирĕн çарсем Лессэ патнелле куçса пынине чарса лартма хăтланса, кунти çырма-çатраллă вырăнсемпе усă курма тăрăшать. Пирĕн Карантан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата Сен-Жан-де-Дэ хулинчен хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем Сент-Андрэ-де-Боон районĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешме пуçланă.

Одон шывĕ çинчи плацдарм районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Сент-Онорин районĕнчен Коломбель патнелле малалла куçнă, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе пынă. Тилли-сюр-Сель хулинчен кăнтăртарахри районра союзниксен çарĕсем йывăр çапăçусем хыççăн вырăнĕ-вырăнĕпе çитĕнÿсем тунă.

Паян ирхине союзниксен Нормандири базисенчен вĕçсе улăхнă истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксем чылай объектсене атакăланă, типçĕр çинчи çарсене тÿрремĕнех пулăшса тăнă.

Союзниксен çарĕсем, вăл шутра французсен чаçĕсем те, тăшман тылĕнче кĕрешнĕ. Кунти ĕçсем питĕ ăнăçлă пулса иртнĕ.

Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 12-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Июлĕн 11-мĕшĕнче нимĕçсем пĕтĕм фронт талккишĕпех нумай хутчен хаяр контратакăсем тунă. Тăшман атакисене сирсе янă, союзниксен çарĕсем кăштах малалла куçнă. Ла-Э-дю-Пюи хулинчен кăнтăралла каякан çул тăрăх наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Лессэ патнелле куçса пыраççĕ. Сентени хыçне тухнă вырăна кăштах аслăлатнă. Сен-Ло хули таврашĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Пон-Эбер хулине союзниксем хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Июлĕн 11-мĕшĕнче нимĕçсем Коломбель хулипе Сент-Онорин хули районĕнче питĕ вăйлă контратака пуçласа янă.

Союзниксен самолечĕсем типçĕр çинчи çарсене кунĕпех пулăшса тăнă, тăшманăн объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, тăватă кун хушши ĕнтĕ Англи самолечĕсем çурçĕр-хĕвеланăç Францири чугун çул транспорт ĕçне юрăхсăра кăларас тесе анлă операцисем тăваççĕ. 60 транспорт центрне ытла тапăннă. Вĕсем урлă нимĕçсем çапăçусем пыракан вырăна подкрепленисем турттарнă пулнă. Халĕ чугун çул узелĕсене нумайĕшне хупăрласа илнĕ, вĕсем тавра çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ составсем купаланса выртаççĕ, вĕсен çывăхĕнчи кĕперсем ишĕле-ишĕле аннă, чи кирлĕ шоссе çулĕсене бомбăсем пăрахса çĕмĕрсе пĕтернĕ.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 12-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем фронтăн мĕнпур тĕп участокĕсенче тăшмана пĕр чарăнмасăр хĕссе пыраççĕ, тăшман вăрахăн каялла чакать. Союзниксен çарĕсем малалла инçех куçман, анчах та вĕсем нумай участоксенче кăшт та пулин малалла куçнă. Усăсăр контратакăсем тăва-тăва, тăшман самаях пысăк çухатусем тÿснĕ. Лес-Мон-Кастр союзниксен аллинче тăрать. Карантан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем каллех малалла куçнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре çапăçусем Тилли-сюр-Сель хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Отто ялĕ патĕнче тата Кан хули çывăхĕнче ларакан Луччи ялĕ районĕнче пыраççĕ.

Июлĕн 11-мĕшĕнче тăшманăн 40 танкне ытла çĕмĕрсе тăкнă. Çурçĕртен пуçласа июлĕн 12-мĕшĕнчи кăнтăрлачченех союзниксен авиацийĕ Брюссель хулинчен пуçласа Бордо хули патне çитиччен сарăлса выртакан районра кĕрешнĕ, тăшман транспорчĕн тĕрлĕрен объекчĕсене тата тăшман çарĕсен колоннисене тапăннă. Июлĕн 12-мĕшĕнче, тул çутăлма пуçласанах, çăмăл истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксем типçĕр çинчи çарсене çапăçура тÿрремĕнех пулăшса пынă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: фронтра вăйлă çапăçусем чарăнмаççĕ. Союзниксен çарĕсем çаплах тăшмана атакăлаççĕ. Тăшман хăшпĕр участоксенче контратакăсем тăвать. Апла пулин те, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ, халĕ вĕсем Лайятико хулинчен инçех те мар ĕнтĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Ареццо хули патнелле çывхарса пыраççĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче лару-тăру сахал улшăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене тата вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем, нумай участоксенче тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, кăштах малалла куçнă. Тибр шывĕ улăхĕпе Ареццо хули хушшинче акăлчансен 8-мĕш армийĕнчи Инди дивизийĕн чаçĕсем, малалла куçса, пĕр яла тата çав ялтан çурçĕртерехри икĕ çÿллĕ вырăна йышăннă. Фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен çарĕнчи Итали чаçĕсем Музоне шывĕ патĕнче пысăках мар территори тытса илнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, наступлени туса пырса, Лигури тинĕсĕ хĕрринче Кастильончелло хулинчен иртсе кайнă, Лайятико хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата хĕвеланăçнерехри сăртлă вырăнсенче тăшманран темиçе позици туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер Тулон порчĕ çине тата тăшманăн Италири ытти объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Истребительсем, Югославипе Албани çийĕнче вĕçсе çÿресе, тăшмана сиен кÿнĕ.

Американецсен 1.100 бомбардировщикĕ Мюнхен районне тапăннă

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян кăнтăрла американецсен 1.100 йывăр бомбардировщикĕ ытла, питĕ йышлă истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Мюнхен районĕнчи чылай объектсене атакăланă. Çанталăк начар тăнипе бомбăсене приборсем кăтартнă тăрăх пăрахнă.

20 бомбардировщик тата 2 истребитель хăйсен базисене каялла таврăнман.

Мюнхен районне çĕнĕрен тапăннă

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла «вĕçекен крепость» йышши тата «либерейтор» йышши бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем 750 самолетран пуçласа 1.100 самолета çитиччен Мюнхен районĕнчи çулйĕрсемпе ытти объектсене çĕнĕрен тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: июлĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Рурти промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Кăнтăр Англи çине нимĕçсен самолет снарячĕсем пыра-пыра ÿкнĕ. Сиен кÿнĕ. Çынсем вилнисемпе аманнисем пур, вилнисен шучĕ пысăках мар.

ХĔРАРĂМСЕМПЕ АЧАСЕМ ЛОНДОНРАН УРĂХ ÇĔРЕ КУÇАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрарăмсемпе ачасем кунсеренех Лондонран урăх çĕре куçаççĕ. Хаçатсем фотоÿкерчĕксем пичетле-пичетле кăлараççĕ. Çав фотоÿкерчĕксем çинче шкул ачисен эшелонĕсем Лондонри вокзалсенчен Англи çĕршывĕн урăх хулисене тухса кайнине кăтартнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, 50 пин ачана яхăн Лондонран урăх вырăнсене куçарса кайнă та ĕнтĕ.

РУЗВЕЛЬТ ХАЙНЕ ПРЕЗИДЕНТА СУЙЛАМА КАНДИДАТА ТĂРАТАССИПЕ КИЛĔШНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, президент Рузвельт июлĕн 11-мĕшĕнче пресс-конференцире çапла каланă: эпĕ хама президента суйлама кандидата тăратассипе килĕшетĕп, суйлас пулсан — тăваттăмĕш срока юлатăп, тенĕ.

РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире çапла каланă: Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитета, де Голль ертсе пыраканскере, ирĕке кăларнă Францире граждан ĕçĕсене туса тăракан власть вырăнне йышăнатăп, тенĕ. Çав комитета США вăхăтлăх правительство тесе шутламасть тенĕ. Рузвельт малалла çапла каланă: Эйзенхауэр союзниксен верховнăй командующийĕ пулса юлать, вăл снабжени çулйĕрĕсене т. ыт. те сыхлама мĕнле мерăсем йышăнма шутлать, çавсене пурне те йышăнма пултарать, тенĕ. Рузвельт çакна палăртса панă: хальхи вăхăтра Францин пĕр пĕчĕк пайĕ çеç гражданла район шутланма пултарать. Пĕрлешÿллĕ Штатсем акăлчансемпе французсем хатĕрленĕ хăшпĕр проектсене сÿтсе-явма йышăнма хатĕр. Пĕрлешÿллĕ Штатсем французсемпе пĕрле, тет, Франци пирки калакан меморандум çырса алă пусĕç, тенĕ.

США-ра 5-МĔШ ВОЕННĂЙ ЗАЕМ АНĂÇЛĂ САРАЛСА ПĔТНĔ

ВАШИНГТОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). США-н финанс министрĕ Моргентау çапла каланă: паян 5-мĕш заема çырăнса илесси вĕçленнĕ. Заема малтан палăртнă суммăран 650 миллион долларлăх ытла сарнă. Пĕтĕмпе июлĕн 8-мĕшĕччен заема 16 миллиард та 650 миллион долларлăх çырăннă.

БОЛГАРИН ПРОПАГАНДА УПРАВЛЕНИЙĔН РУКОВОДИТЕЛЬНЕ ВЫРĂНТАН КĂЛАРНĂ

СТАМБУЛ, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари хаçачĕсем Болгарин пропаганда дирекцийĕн руководительне Коцева вырăнтан кăларни çинчен пĕлтереççĕ. Кунта паллă пулнă тăрăх, Коцева «вăл Болгари халăхĕн шухăш-кăмăлне хăпартмалли пропагандăллă майсем тупайманрĕ» тесе айăплаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн X-мĕш пленумĕ

Июлĕн 10—11-мĕшĕсенче Шупашкарта ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн X-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум комсомолăн ялти организацисен задачисем тата комсомола илес ĕçĕн 1944 çулхи 6 уйăхри итогĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ.

Комсомолăн ялти организацисен задачисем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче çураки итогĕсем çинчен, комсомол организацисем çуракинче мĕнле ĕçлени тата ĕçре пулнă çитменлĕхсем çинчен каларĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл комсомолăн ялти организацисем çывăх вăхăтрах пумалли ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Республикăри колхозсем çурхи ака ĕçне вăхăтра вĕçлерĕç. Республика çураки планне 100,5 процент тултарчĕ. Уйрăмăнах Вăрнар, Красноармейски, Чурачăк, Калинино тата ытти районсенчи колхозсем çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ. Çак асăннă районсенче партипе комсомол организацисем колхоз массине вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентсе пынă.

Пирĕн уйхирсенче ялти çамрăксем тухăçлă тырпулшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем трактористсемпе комбайнерсем, механиксем пулса ĕçлеççĕ, звенасемпе бригадăсене, колхозсене е фермăсене ертсе пыраççĕ.

Çураки вăхăтĕнче 7.266 колхозник-комсомолецран 6.216 çын сука тунă, сÿреленĕ тата акнă çĕрте ĕçленĕ. Ыттисем выльăх-чĕрлĕх фермисенче конюхсем пулса ĕçлеççĕ.

Комсомол организацисем социализмлă ăмăртăва анлăн пуçарса пыраççĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешекен комсомолецсемпе çамрăксен звенисене 453 çĕрте тунă. Ку звеносене ялхуçалăх ĕçне пĕлекен чи лайăх комсомолецсемпе çамрăк колхозниксем ертсе пыраççĕ.

Вăрнар районĕнчи «Победа» колхозри Василиса Степанова ертсе пыракан çамрăксен звенине пĕтĕм республика пĕлет. Звенора 8 çын. Вĕсем кăçал 6 гектар ыраш тулă, 2 гектар çĕрулми, 0,5 гектар тымар-çимĕç, 0,35 гектар пахча-çимĕç лартнă.

Вăрнар районĕнчи комсомолецсем хăйсем кăна хĕл вăхăтĕнче 189.160 лав тислĕк, 2.240 центнер кĕл, 1.680 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Вырăнти удобренисем турттарас тĕлĕшпе 30 колхозра транспорт бригадисем организациленĕ, 30 колхозра агротехника вĕрентмелли кружоксем тата стахановецсен шкулĕсем уçнă. Çав кружоксемпе шкулсем урлă 300 плугарь, 120 сÿресĕ, 54 акаçă вĕрентсе кăларнă.

Çавăн пекех Çĕрпÿ, Чурачăк, Красноармейски тата ытти районсенчи комсомолецсем те çуракинче малти ретре пынă.

Çаксемпе пĕрлех пленум комсомолăн ялти организацисен ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Чкаловски, Первомайски тата ытти районсенчи колхозсем çураки ĕçĕнче кая юлса пычĕç. Кунти комсомол организацисем те вара колхозсене мала кăларас тесе çителĕксĕр ĕçленĕ. Комсомолăн Ишлей, Сĕнтĕр, Улатăр, Йĕпреç райкомĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешекен звенасем тăвас ĕç сине сиелтен пăхаççĕ.

Кувакинă, Шăмăршă, Улатăр, Пăрачкав, Чкаловски райкомĕсем çĕртме тăвас ĕçе колхоз çамрăкĕсене çителĕксĕр явăçтарнă. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес енĕпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кунпа чылай колхозсенче выльăхсен йышĕ чакса пырать.

Комсомолăн чылай организацийĕсем колхоз пурнăçĕпе интересленмеççĕ, çитменлĕхсемпе килĕшсе лараççĕ. Вĕсем колхоз хуçалăхне çирĕплетес, ялхуçалăх артелĕн уставне пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе партипе совет органĕсене сахал пулăшаççĕ.

Çак çитменлĕхсем комсомол организацисен кадрсене воспитани парас ĕç сине сиелтен пăхнинчен, решенисене епле пурнăçланине тĕрĕслесе тăманнинчен, ялти çамрăксем хушшинче политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынинчен килеççĕ.

Комсомола илес ĕçĕн 1944 çулхи 6 уйăхри итогĕсем çинчен ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ доклад турĕ.

Кăçал 6 уйăх хушшинче 5.496 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Вăл шутран колхоз çамрăкĕсем — 2.169 çын, служащисем—445 çын, шкул ачисем — 2.070 çын.

Анчах та, 1943 çулпа танлаштарсан, комсомола илес ĕç кăçал чылай япăхланса пырать. 2.446 пуçламĕш организацирен 626 организаци улттă уйăх хушшинче пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Уйрăмăнах Йĕпреç, Ишлей, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Шăхасан райкомĕсемпе Шупашкар, Улатăр горкомĕсем çамрăксене комсомол ретне сахал явăçтарнă. Хăшпĕр райкомсем ку ĕçре йăнăшсем те тăваççĕ. Комсомола кĕме панă заявленисене темиçе уйăхшар пăхса тухмасăр тытса усраççĕ, комсомола илес тĕлĕшпе устава пăхăнмаççĕ, комсомол билечĕсене памасăр нумай вăхăт тытса тăнă фактсем те пулаççĕ.

Пленум ВЛКСМ Обкомĕпе горкомĕсен тата райкомĕсен бюровĕсене комсомола илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе чăнласа ĕçлеме кирли çинчен асăрхаттарса хăварчĕ. Уйрăмăнах вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперации артелĕсенче çак ĕçе вăйлатмалла. Пуçламĕш организацисен секретарĕсене ĕçре пулăшас тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕсен вĕсемпе час-часах семинарсем, канашлусем ирттермелле, вĕсен пĕлĕвне ÿстерме майсем туса памалла.

Пленум икĕ ыйту тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум П. М. Бочков юлташа ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма суйларĕ, ăна ВЛКСМ Обкомĕн пленумĕпе бюровĕн составне кĕртрĕ. Пленум Т. А. Табакова юлташа хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующийĕ пулма çирĕплетрĕ, ăна ВЛКСМ Обком пленумĕпе бюровĕн составне кĕртрĕ.

Пленум ĕçне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Лозин юлташ, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн представителĕсем Мельникова тата Мельников юлташсем хутшăнчĕç.

Хусанти медицина институчĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Институтра виçĕ факультет пур: 1) сывлăха сыхласси, профилактика факультечĕ, 2) санитарипе гигиена факультечĕ, 3) педиатри факультечĕ.

Пур факультетсенче те 5 çул вĕренмелле.

Института 17 çултан пуçласа 35 çула çитнисене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Заявленисене институт директорĕ ячĕпе ямалла. Заявленире мĕнле факультетра вĕренме шутланине кăтартмалла. Заявленипе пĕрле автобиографи тата çакăн пек документсем ямалла: а) вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен калакан аттестат (аттестатне хăйне, копине мар), б) виçĕ фотокарточка (вĕсен пысăкăшĕ 3×4 сантиметр пулмалла), в) паспорт (ăна кашни хăй кăтартать), г) çара каяс тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла).

Вăтам шкултан отличник пулса вĕренсе тухнисене вĕренсе тухнă хыççăн икĕ çул хушшинче экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Испытанисем физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа пулаççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме тытăнаççĕ.

Институтăн снабжени отделĕ, столовăй, пулăшуллă хуçалăх пур.

Лайăх вĕренекен студентсене стипенди параççĕ. Отечественнăй вăрçăра пулнисенчен, пенсионерсен ачисенчен, Хĕрлĕ Çара кайнă рядовойсемпе кĕçĕн начальство составăн шучĕпе пурăнакансенчен вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ.

Адрес: г. Казань, Университетская, 13, Приемная Комиссия Мединститута.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех илемлĕ саслă çĕнĕ фильм

«НЕБО МОСКВЫ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: технологсем, ОРС валли главнăй бухгалтер, секретарь-машинисткăсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем тата çакăн пек рабочисем: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, электромонтерсем, контролерсем, строительнăй рабочисем, уборщицăсем, подсобнăй рабочисем тата курьерсем.

Вахтерсем (охранниксем), арçынсемпе хĕрарăмсем, тата пушартан сыхлакан работниксем кирлĕ. Хваттер параççĕ.

Заводăн транспорт цехне çакăн пек работниксем кирлĕ: рулевой е моторист-рулевой, поездсем пухса хатĕрлекенсем, сцепщиксем, стрелочниксем, шоферсем, мотовозсене, вагонсене пăхакансем, çул рабочийĕсем, грузчиксем тата возчиксем. Общежити параççĕ.

Çавăн пекех тата урăх квалификаци вĕренес текенсене (14 çула çитнĕ е унтан иртнĕ çынсене) илеççĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80. Бюро пропусков. Куллен 11 сехетрен пуçласа 3 сехетчен ыйтма юрать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00259 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.